## Пирĕн истори

# Çамрăклăх, комсомол чĕререх паян та...

Октябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шывра комсомол 90 çул тултарнине уявларĕç. Унччен 3 кун маларах вара октябрĕн 26-мĕшĕнче Мускавра Кремльти керменте тĕрлĕ çулсенчи комсомол активисчĕсемпе хаваслă пуху ирттерчĕç. Унта пирĕн район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та хутшăнчĕ.

–Совет Союзĕ саланнăранпа 17 çултан пĕрремĕш хут патшалăх шайĕнче паллă турăмăр комсомол çуралнă куна, – терĕ Юрий Александрович иртнĕ юн кун çак куна халалласа ирттернĕ районти мероприятинче.

Ĕçленĕ чух, комсомолта чух вара тунсăхлама вăхăт та пулман.

– 1960-мĕш çулсенче комсомол чăхчĕп, ĕне фермисене шефа илме пуçларĕ. Комсомолецсен бригадисене, комсомолецсенчен тăракан фермăсене йĕркелеттĕмĕр. Комсомол хĕрӳлĕхĕ тапса тăратчĕ çав çулсенче çамрăксенче, – аса илет паян Николай Борисович.

1965 çулта вара ВЛКСМ райкомне Е.Е. Елькин ертсе пыма пуçланă. Вăрçă çулĕсем, хыççăнхи çулсем хыçра ĕнтĕ.



Районти историпе краеведени музейне вара çак кун, комсомол 90 çул тултарнă кун, тĕрлĕ çулсенче ВЛКСМ райкомĕн секретарĕсем, ВЛКСМ райкомĕнче ĕçленисем, ВЛКСМ райкомĕн бюро членĕсем пулнисем пуçтарăнчĕç. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вĕсене пурне те уяв ячĕпе саламларĕ, çирĕп сывлăх, ăнăçу, комсомолла хастарлăх сунчĕ.

Аса илмелли вара кашниййĕнех пур. Муркаш районĕнчи ВЛКСМ райкомне Ф.А. Григорьева йĕркелесе янă. Феодосия Артемьевна комсомолтан пĕр çул аслăрах.

–Вăрçă вăхăтĕнче йĕркелесе янă çĕнĕ Муркаш районĕн ВЛКСМ райкомне ертсе пыма шансан, хирĕçлемерĕм. Аюк тесе тăман ун чух. Пирĕн, комсомолецсен, ун чух пĕр девиз пулнă: йăлтах фронта валли, – аса илет паян 91 çулхи комсомолка.

Пуçтарăннисем тăрса пурнăçран уйрăлнă комсомолецсене, ĕçри юлташĕсене аса илсе пĕр минут шăп тăчĕç.

Унтан асилӳ çăмхи малалла кусрĕ. 1960-мĕш çулсенче ВЛКСМ райкомне Н.Б. Борисов ертсе пынă. Комсомолпа пĕр кунта çуралнăскер, çак хушăра вăл хăй вĕри чĕреллĕ комсомолец пулнине пĕрре те асран кăларман.

– Çав вăхăта çамрăксен хастарлăхĕ шупкални палăрма пуçларĕ. Çавăнпа та ВЛКСМ Тĕп комитечĕн улттăмĕш пленумĕнче патриотизма çĕнĕрен вăратассипе ума тĕллевсем лартрĕç, – тет Евгений Евстафьевич.

Ку вăхăта районта комсомолецсен йышĕ 3 пин çынран та иртнĕ. Евгений Евстафьевич вăл вăхăтри пурнăçа сăнлакан кинопленка сыхланса юлни çинчен те каларĕ. Район историйĕшĕн тем пысăкăш парне пулĕ вăл.

А.Г. Григорьев вара ВЛКСМ райкомне комсомол 50 çул тултарсан ертсе пыма пуçланă.

– Çав вăхăтра ĕнтĕ ĕçпе юрă уявне районта массăллăн ирттерме пуçларăмăр, – ун чухнехи вăхăта куç умне кăларать Анатолий Григорьевич. – ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн куçса çӳрекен ялавне çĕнсе илчĕ ун чух район.

Ун хыççăн комсомола районта А.П. Скворцов ертсе пыма пуçларĕ. Ун чух комсомолецсен йышĕ 4,5 пинрен те иртнĕ.

– Çулсеренех пĕрер пин çамрăка комсомола илеттĕмĕр, – тет Алексей Петрович.

Ку вăхăтра комсомол билечĕсене улăштарса пĕтернĕ. А.П. Скворцов çапла майпа Ленинла комсомолăн 18 съезчĕн делегачĕ пулма тивĕç пулчĕ.

– Комсомолта эпĕ тата мăшăр тупрăм, – ăшшăн тинкерет вăл хирĕç ларакан мăшăрĕ çине.

1978 çулта ВЛКСМ райкомне В.И. Вязов ертсе пыма пуçласан вара районта кадрсен ыйтăвĕпе хытă ĕçлеме пуçланă. Районти комсомол организацийĕ республикăри чи лайăххи шутланнă. Валерий Иванович ялсенче çĕрле комсомол пухăвĕсене ирттернине аса илчĕ.

– Ун чух ĕç хыççăн никам та киле васкаман. Вырăнта тухса пуху ирттерме васканă. Хальхи пек транспорт пулман. Çуранах çӳреттĕмĕр инçетри ялсене те, – каласа парать Валерий Иванович.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вара ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче 80-мĕш çулсенче ĕçленĕ.

– Паянхи пекех астăватăп хам комсомола кĕнине. Анатолий Григорьевич ун чух пĕрремĕш секретарьччĕ. Вăл панă ыйтусем паян та асра, – ачалăха куç умне кăларать Юрий Александрович.

Астумасăр, аса илĕр-ха, ун чух пурте комсомола кĕресшĕнччĕ. Начартарах вĕренекеннисене илместчĕç комсомола, вĕсем лайăхрах вĕренме тăрăшатчĕç. Комсомола кĕреймесен намăсчĕ. Ырă ятлахчĕ çав комсомол.

80-мĕш çулсенче вара районта комсомолецсем выльăх-чĕрлĕх отраслне витĕм кӳме пуçланă. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен слетне шăпах çав вăхăтра ирттернĕ. Унсăр пуçне комсомол потребкооперации çине тимлĕрех пăхма пуçланă. Кӳршĕллĕ Марий Эл республикинчи Горномарийски районĕпе паян район тачă çыхăнура. Пĕрремĕш туслă тĕл пулу вара Муркаш районĕнчи райпосемпе Горномарийски районĕн райповĕ хушшинче иртрĕ. Районти комсомолецсем çав 1980-мĕш çулсенче агитбригадăсем йĕркелесе янă, концертсемпе нумай çӳренĕ.

Ун хыççăн ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçленĕ В.В. Степановăн та аса илмелли çук мар. Вăл вăхăтра воин-интернационалистсене асăнса монумент лартрĕç Москакасси патĕнче, районти çар комиссариатĕнче Çар мухтавĕн музейне турĕç, Муркашри гостиницăн путвалĕнче çул çитмен çамрăксен клубне уçрĕç.

Мĕн чуль вăхăт иртсен та çамрăклăх манăçмасть иккен. Пирĕнтех вăл, пирĕн чĕререх хамăр комсомолта пулнă çулсем, пурнăçăн илемлĕ çулĕсем. Асăнмалăх пултăр тесе ĕнерхи комсомолецсем районти историпе краеведении музейĕн территорийĕнче симĕс тата кăвак чăрăшсем лартса хăварчĕç. Паянхи çамрăксемшĕн асăнмалăх пултăр çакă ĕнерхи çамрăксенчен. Çамрăклăхра ырă ĕçсем ытларах тумаллине аса илтерсе тăччăр вĕсем.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: пĕрремĕш секретарьсем йывăç лартаççĕ.**

## Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Министра кăтартма тивĕçлĕ шкул

Паянхи пурнăçра пĕлӳ питĕ пысăк вырăн йышăнать. Кашни çул экзаменсем йывăрланса, улшăнса пыраççĕ. Çавна май çĕнĕрен çĕнĕ кĕнекесем пичетленеççĕ. Нумайăшĕн килĕсенче компьютерсем пур, Интернета тухма пултараççĕ. Вĕренӳ заведенийĕсенче те унта Интернет урлă кирлĕ информацие шыраса тупма пулать.

Халĕ эпĕ 11-мĕш класра вĕренетĕп. Юлашки çул ĕнтĕ шкул пурнăçĕнче... Аслă çул çине тухма та вăхăт çитет. Çак çулсенче манăн юратнă Чуманкасси шкулĕ куç умĕнчех улшăнса пычĕ. Енчен те эпир кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне «компьютер» сăмаха илтнĕ çеç пулсан, хальхи ачасем пĕчĕкренех унпа усă курма пĕлеççĕ. Шкул капăрланса, çĕнелсех пырать. Тухса та каяс килмест ĕнтĕ.

Пирĕн юратнă шкулта паянхи кун шкул автобусĕ те, «Газель» микроавтобус та пур. Кашни вĕренӳ кунĕнчех автобуссем 6 ялтан вĕренекенсене шкула илсе килеççĕ, уроксем вĕçленсен вара килĕсене леçсе хăвараççĕ. Шупашкара та классемпе экскурсисене тухса çӳреççĕ.

Шкул оргтехникăпа пуян: 21 компьютер, Интернет, «Вĕрентӳ» наци проекчĕпе хими, физика, географи, вырăс чĕлхин кабинечĕсене çĕнĕ йышши вĕрентӳ оборудованийĕ вырнаçтарнă. Енчен те малтан пĕтĕм шкул валли пĕр глобус пулнă пулсан, халĕ вара кашни ачана çитет.

Пур япала та çиелтен çеç мар, шалтан та илемлĕ пулмалла. Кунта вĕрентекенсен коллективĕ те кĕрет. Пирĕн шкулта питĕ пултаруллă учительсем вăй хураççĕ. Вĕсем тăрăшнипе, уроксем хыççăн юлса ачасемпе хатĕрленнипе, тарăн пĕлӳ пама тăрăшнипе вĕренекенсем тĕрлĕ конкурссемпе олимпиадăсенче малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Шкул районти, республикăри мероприятисене те хутшăнать. Республика шайĕнче иртекен чылай конкурссенче палăрма пултарчĕ Чуманкасси шкулĕ. «Ачасен чи лайăх ĕç бригади», «Шкул çумĕнчи чи лайăх ĕçпе производство участокĕ», «Эпĕ – Раççей гражданинĕ», «Чечек клумбисене йĕркелекенсенчен чи лайăххи» тата ытти конкурссенче малти вырăнсене йышăнса Муркаш районĕн ятне тивĕçлипех хӳтĕлерĕ юратнă шкулăм. Кашни çул республикăра пулса иртекен «Русский медвежонок», «Кенгуру», Чувашская ласточка» конкурссене те эпир хастар хутшăнатпăр, дипломсем илме тивĕç пулатпăр.

Пирĕн шкул тул енчен пăхсан питĕ капăр. Шкулăн çĕнĕ çивиттийĕ хĕвел çинче çутăлать çеç. Пирĕн «иккĕмĕш киле» кăçал тунă картиш картласа тăрать. Шкул пахчинче эпир хамăр вăйпа тĕрлĕрен пахча çимĕç ӳстеретпĕр, илемлĕ чечексем лартса шкула татах та хитре сăн паратпăр.

Нумаях пулмасть пирĕн пата Чăваш Республикин вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Г.П. Чернова килсе курчĕ. Чуманкасси шкулĕ малаллах туртăннине палăртрĕ Галина Петровна. «Шкул шалтан та, тултан та питĕ илемлĕ»,– тесе каларĕ министр шкул килĕшнине палăртса. Чăнах та, малалла татах та сулмаклăхрах утăмсем тăвасчĕ. Çакна валли Чуманкасси шкулĕнче пур условисем те пур.

**Оля ПАВЛОВА.**
**Чуманкасси шкулĕ.**

## Юбилей

### *Саламлатпăр*



Муркашра пурăнакан хаклă çыннăмăра, мăшăра, хĕрĕме, аппана, аннене, мăнака, кумана – **Алина Аверкиевна СОЛОВЬЕВАНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ кирек хăçан та ĕçшĕн çунса тăнипе, хăвăнтан çирĕп ыйтнипе палăрса тăратăн. Санăн ырă кăмăлу пире хавхалантарса тăрать, пурăнма вăй-хăват парать. Сана юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр, малашне те телей çăлтăрĕпе пĕрле çӳре, яланах савăк кăмăллă, паянхи пек хитре пул, нумай çулсем хушши тулăх пурнăçпа савăнса пурăн. Ан чирле, ан ватăл нихăçан, çут хĕвел пек ăшă пул ялан.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ачисем, кинĕсем, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачисем, Гордеевсен, Колбасовсен, Ефимовсен, Валежниковсен çемйисем.**



Хаклă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçа – Сентимĕр ялĕнче пурăнакан **Евгений Иванович МУЗЫКОВА** 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, юман пек çирĕп сывлăх тата ăнăçусем сунатпăр. Нумай-нумай çул ачусемпе мăнукусене савăнтарса пурăн.

**Салампа мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.**



Хорнуй ялĕнче пурăнакан Çар ĕçĕпе ĕçлесе пенсие тухнă **Алексей Михайлович ОШМАНОВ** подполковник ноябрĕн 3-мĕшĕнче 50 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çав ятпа ăна саламласа çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Пурнăç çулĕ яланах санăн такăр пултăр. Çемьепе яланах килĕштерсе пурăнма Турă пулăштăр.

**Салампа: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, мăнукĕ, шăллĕсем Саша, Юра тата вĕсен мăшăрĕсемпе ачисем.**



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçине – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Владимир Михайлович ВАЛЕЖНИКОВА** ноябрĕн 1-мĕшĕнче 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ яланах санпа пĕрле пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе икĕ ывăлĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, виçĕ мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем, Поликарповсен, Алексеевăсен, Сибиряковăсен, Мразовсен, Потаповсен, Комиссаровсен, Муркашри Валежниковсен çемйисем.**



Муркашра пурăнакан **Зоя Николаевнăпа Реннадий Григорьевич КИРИЛЛОВСЕМ** – нумай-нумай çул хушши Орининти «Шурăмпуç» халăх юрăпа ташă ансамблĕн, Муркашри халăх фольклор ушкăнĕн участникĕсем. Вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе Пушкăрт, Тюмень, Тутарстан таранах çитсе унти чăвашсене чăваш юрри-кĕввисемпе савăнтарнă. Ноябрĕн 4-мĕшĕнче вĕсен кĕмĕл туйĕ. Вĕсене татах та нумай-нумай çул хушши савăнса юрласа çӳреме ырлăх-сывлăх, телей, иксĕлми вăй-хăват сĕнетпĕр.

**Саламлаканĕсем: районти Культура çурчĕн дирекцийĕ, «Муркаш», «Шурăмпуç» халăх фольклор ушкăнĕн участникĕсем тата çывăх тăванĕсем.**

## Пирĕнтен тĕслĕх илĕр

# Манăн пĕчĕк хурăнтан пуçланать пысăк вăрман

«Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?»– тесе ыйтсан, куç умне аслă уй-хир, шăнкăр-шăнкăр юхан шыв, кашласа ларакан симĕс вăрман тухса тăраççĕ. Тăван кĕтесе юратас та, упрас та килет. Яланах пирĕн енче куç тулли тулă пуссисем, тăрă та таса çăл куççемлĕ юхан шывсем, кашласа ларакан кăмпапа çырлаллă вăрмансем пулчăр.

Тăван çĕре юратма ачасене мĕн пĕчĕкрен вĕрентсе пыратпăр, çут çанталăка упрама, сăнама вĕрентетпĕр. Нумаях пулмасть Москакасси ялĕнчи библиотекăра «Береза и все вокруг нее» экологи сехетне ирттертĕмĕр. Калаçу пĕтĕмĕшле пирĕн юратнă шурă хурăн çинчен пычĕ ĕнтĕ.

Ачасем хăйсем те хурăн çинчен нумай информаци пуçтарнă. «Шурă хурăн мĕншĕн макăрать?» викторина та ачасене тарăн шухăша ячĕ. Виççĕмĕш классене вĕрентекен Роза Гурьевна Федорова та ачасене хурăн сиплĕхĕпе медицинăра усă курни çинчен, тĕрлĕ-тĕрлĕ эмел хатĕрлени пирки каласа пачĕ. Шурă хурăн вăл Раççей символĕ пулнине палăртса хăварчĕ.

Экологи сехечĕн иккĕмĕш пайĕ вара татах интереслĕ те усăллă иртрĕ. Ачасем, пĕр шухăшлă пулса, Хачăк плотини хĕрринче хурăнсем лартса хăварчĕç. 25 çамрăк хурăн сарă çулçисемпе пăшăлтатса 3-мĕш класс ачисене тав сăмахĕ каларĕ пуль. Çак пĕчĕк хурăнсенчен пуçлантăр пысăк та илемлĕ раща.

**Р. СИБЯКОВА, Москакасси ялĕнчи библиотека ертӳçи.**



**Каш! кашлĕç кайран илемлĕ хурăнсем кунта.**

## Ырă ĕçсен çулталăкĕнче



**Эпир лартакан йывăççем малашне хăйсен илемлĕхĕпе чуна илĕртчĕр.**

# Активлăхпа палăрса тăраççĕ

Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çуртĕнче 25 ватă çын пурăнать. Вĕсенчен 9-шĕ – Муркаш районĕнчен. Вĕсем те малашнехи шăпа мĕнле килесси пирки нихăçан та шухăшламан пулĕ, анчах та кунта хӳтлĕх тупнишĕн пĕрре те пăшăрханмаççĕ ватăсем. Вĕсене кунта килĕшет.

Нумаях пулмасть интернатри ватăсем йывăç лартассипе уйăхлăха активлă хутшăнчĕç. Кунта пурăнакан ватăсем те хăйсен территорине тирпей-илем кĕртме тăрăшаççĕ.

Пирĕн интернатра кăтартуллă пӳлĕмсем пур. Вĕсенчен пĕри – Николай Павлович Павловăн. Хăй вăл Канаш районĕнчен. Пенси укçине алла илсенех Николай Павлович: «Татах мĕн туянам-ши?»– тесе шухăша каять.

Акă нумаях пулмасть вăл хăйĕн пӳлĕмне комод илсе лартрĕ. Ватă çыннăн чунĕ те савăнчĕ.

**В. КРЮЧКОВА, культорг.**